# ПĔЧĔК ЮРĂ КĂНА МАР

ИРЛИДА Алексеевна Петрова 1913 çулхи мартăн 16-мĕшĕнче хальхи Пушкăрт АССРĕн Пишпÿлек районĕнчи Йăлпăлакра учитель килйышĕнче çуралнă. Тепĕр çулхинех вăрçăран чирлесе таврăннă ашшĕ вилсе паять. Çичĕ çул вĕреннĕ хыççăн пулас çыравçă Хусан педтехникумне кĕрет. Хулари концертсенче вăл халăх юррисем юрлать. Юрăçă пулас ĕмĕтпе И. Петрова Шупашкара килет, театр çумĕнчи студие çÿренĕ вăхăтрах театрта та ĕçлет. 1930 çулта театр искусствин Тĕп техникумне вĕренме кĕрет, тепĕр икĕ çултан ăна кунти консерватори çумĕнчи опера студине илеççĕ. 1941 çулта Ленинградри консерватори çумĕнчи музучилищĕрен вĕренсе тухать. Вăл Мускавра, Хусанта, Ленинградра юрланă. Вăрçă пуçлансан, эвакуаципе Оренбурга çитет, унта ĕçлет, пĕр хушă юрă ансамбльне ертсе пырать.

1974 çултанпа вăл Мускав облаçĕнчи Калининградра пурăнать, унти Культура çурчĕ çумĕнчи литпĕрлешĕве çÿрет. Йывăр чирлĕ пулин те, поэтесса литература ĕçне пăрахмасть. 1980 çултанпа вăл — СССР Писательсен союзĕн членĕ. Хăй ĕçне епле иленни çинчен И. Петрова чМан асăмри Миттав асилÿре витĕмлĕ çырса кăтартнă.



чЭп ачаран юрлаттăм. Сассăма та мухтатчĕç. Ытти халăха хамăр тăван юрăпа паллаштарăп, тăван халăха юрăпа савăнтарăп, теттĕм. Вĕренсе пĕтерсе пыратăп. Пĕтертĕм те... ак ман сасă пĕтсе ларчĕ. Сассăм... çук, Пĕр хуйхă теприне сĕтĕрет... Эп пурнакан çĕрте чăваш çук. Чăвашла калаçас вырăнне эпĕ, сассăр юрăçă, сассăр юрлатăп, асăмра.

Хуллен-хуллен, хам шухăшăма хам сăмахăмпа каласшăн пулнине, чсăвăж тейĕпĕр, çыра пуçларăм. Ку ĕç ман çунса кăварланнă чунăма лăплантара пуçларĕ. Вара эпĕ Шупашкара пытăм. «Сăввăмсенеи кăтартма,

Эпĕ кĕрлен-шавлан тинĕс авăрĕнче пек. Мана çăлма пыма кимми те çук, çанталăкĕ те тинĕсе тухма памасть. Митта мана: чХăвах ишсе тухатăн, хăвна ху çăлмасан, сана никам та çăлаймĕн,— тенĕ пек туйăнать. Вăл мана: чЭс поэтв,— терĕ. 1955 çулта ман икĕ сăвва чТăван Атали журналта пичетлесе хăварчĕн.

Кун çумне çакна та хушар: хăй вăхăтĕнче, Шупашкарти музтехникумăн 1929—1930-мĕш вĕренӳ çулĕнчи концерчĕсене хакласа çырнă май, Ф. П. Павлов Ираида Петрова сцена çинче илемлĕ те хăюллă юрлама пултарнине палăртнă.

Поэтессăмăр малтан лирика сăввисемпе ят илчĕ. иПурнăç çиппио кĕнекине гражданла лирикăпа юрату сăваисем кĕнĕ. Вĕсенче авторăн тĕп туртăмĕсем сисĕнеççĕ.

И. Петрова Тăван çĕршыв илемне сăнларĕ, вăрçа сивлерĕ, миршĕн кĕрешекенсемпе ĕç паттăрĕсенчен ырă тĕслĕх илме йыхăрчĕ.

И. Петрова сăввисенче уйрăм çыннăн пурнăçĕ гражданла кĕвĕсемпе пĕтĕçсе тăрать, ку вара калас шухăша çивĕчрех те илемлĕрех пĕлтерме пулăшать. Ахальтен мар В. Г. Белинский çапла каланă: хĕрарăм поэзире арçын курман-асăрхаман тĕрлĕрен сĕме-ене кăтартма пултарать. Хĕрарăм-сăвăç хăйĕн кулленхи ĕçпуç уйрăмлăхĕсене кура тĕнче çине хăйĕн ĕçĕ-хĕлĕ витĕр пăхать. чМир çинченв сăвăра, акă, поэтесса вăрçăсăр пурнăçа çапла хаклать:

Тăнăç кунçул—савăшпа юрату,  
Тăнăç кунçул—ман тута, сан туту.  
Тăнăç кунçул—хĕвеллĕх сăпки вăл,  
Çав сăçкари санпала манăн ывăл.

Ачаран юрлама юратни, ăсталăха вĕренни И. Петрова поэзине имлĕх парса тăрать. Унăн юрату лирики те çакна лайăх ĕнентерет. Автор юрă-романса ăсталăх ĕнчи вырăнне хурать, хăй пултарулăхĕн çăлкуçĕ тесе шутлать.

Лирикăри асăннă туртăм И. Петрован пысăкрах калăплă хайлавĕнче — «Кунçул юппинчеи (чТелейпе Илемв) трагедире вăйлăрах. Ирĕклĕхшĕн кĕрешекенсем хăйсен пурнăçне те шеллемеççĕ.

Поэтесса уйрăмах чăваш хĕрарăмĕн иртнĕ кунçулĕ çинчен çырма, ун хастарлăхне сăнлама тимлерĕ. Çакна эпир унăн сăввисенче те, трагединче те куртăмăр. кТатюкн повесть вара пире Совет влаçĕн малтанхи çулĕсенчи тăлăх чăваш хĕрачин пурнăçĕпе паллаштарать. Ача-пăча вăйăи-кулли-пе пĕрлех кунта унăн хуйхи-суйхине те çырса кăтартнă, çĕнĕ самана пурнăça çĕнĕ сывлăш вĕрсе кĕртни те лайăх сисĕнет. Автор ача-пăча психологине, халăх йăли-йĕркине тĕплĕ пĕлни пур çĕрте те палăрать.

иПĕчĕк юрă кăна пулса юласчĕ халăх асĕнчеи,— тесе ĕмĕтленнĕччĕ И. Петрова. Ĕнтĕ халĕ çапла пĕтĕмлетме май пур: поэтесса кунçулĕ тăван культурăра пĕчĕк ырă юрă пулса кăна мар, ытларахххăн та йĕрленсе юлас шанчăк пур. Ахальтен мар унăн нТелейпе Илемĕя театр сцени çинче çиччĕмĕш çул пырать. И. Петроваь ытти хайлавĕсем те çивĕчлĕхпе, илемлĕхпе илĕртеççĕ. Сăвăç ӳкерсе кăтартнă хастар чăваш хĕрарăмĕсен сăнарĕсем çирĕп те пысăк чунлă пулма йыхăраççĕ. Тайма пуç ăна тăван халăхăн чун пахалăхне кăтартнăшăн!

**Геннадий ЮМАР1.**